26-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 ДЕКАБРЬ 21 ЭРНЕКУН
247 (6998) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховный Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаçачӗ

Участокри суйлав комиссийӗ

Округсенчи суйлав комиссийӗсен составне çирӗплетнӗ хыççӑн, республикӑри ӗççынни депутачӗсен райсовет исполкомӗсем участоксенчи суйлав комиссийӗсен составне çирӗплетес ӗçсене вӗçлерӗç. Чӑваш республикинче мӗнпурӗ 901 суйлав комиссийӗ туса хунӑ, вӗсенче пиншер çын ӗçлет.

Участоксенчи суйлав комиссийӗсен составне республикӑри чи лайӑх çынсене, халӑхӑн авторитетлӑ представителӗсене, Отечественнӑй вӑрçӑра алла хӗçпӑшал тытса тӑшмана хирӗç хастарлӑн кӗрешнӗ çынсене е тылра вӑйне шеллемесӗр ӗçленӗ çынсене çирӗплетнӗ. Халӑх вӗсене Суйлав Законне тӗрӗс пурнӑçа кӗртес ӗçе шанса парать.

Суйлав участокӗ—суйлава хатӗрленнӗ вӑхӑтра агитаципе пропаганда тата организациллӗ пӗтӗм ӗçӗн центрӗ пулса тӑрать. Союз Советне суйлас тӗлӗшпе те, Национальноçсен Советне суйлас тӗлӗшпе те суйлав участокӗ пӗрех пулать. Участокри суйлав комиссийӗсен ӗçӗсем пысӑк та пархатарлӑ. Участокри комиссисем лайӑх ӗçлени сулавçӑсен прависемпе вӗсен интересӗсем çирӗппӗн пурнӑçа кӗрсе пырассине пӗлтерет, пирӗн суйлавçӑсене хӑйсен суйлав тивӗçӗпе туллин усӑ курма майсем туса парать.

Участокри суйлав комиссийӗсене суйлавçӑсене сасӑлама май туса парас ӗçе организацилеме хушнӑ. Вӑл комисси вара суйлавçӑсен массисемпе тӳррӗмӗнех, куçа-куçӑн тӑрать. Çавӑнпа та ӑна организацилесси çине, суйлав комиссисен составне туса çирӗплетес ӗç çине уйрӑмӑнах çаврӑнса пӑхни кирлӗ пулчӗ.

Участоксенчи суйлав комиссийӗсем ӗçе тытӑнаççӗ. Чи малтанах, вӗсем хӑйсен участокӗсемпе, суйлав Положенийӗ тӑрӑх вӗсене паракан правӑсемпе тата обязанноçсемпе паллашаççӗ. Районсенче халӗ участоксенчи суйлав комиссийӗсен председателӗсемпе секретарӗсен канашлӑвӗсене ирттереççӗ, вӗсене ӗçлеме тивӗçлӗ кӑтартусем параççӗ.

Пирӗн халӑх суйлав кунне пысӑк уява хатӗрленнӗ пек хатӗрленет. Халӗ республикӑра участоксенчи суйлав комиссисем валли пӳлӗмсем уйӑрса параççӗ. Суйлав комиссийӗсен пӳлӗмӗсем вӑрттӑн сасӑлама юрӑхлӑ пулмалла, вӑл пӳлӗмсене кирлӗ пек илемлетсе тухмалла. Ку енӗпе участокри суйлав комиссисен тӑрӑшса ӗçлемелле, суйлав участокӗсен пӳлӗмӗсене илемлетес ӗçе ӗççыннисен анлӑ массисене хутшӑнтармалла.

Шупашкарта, Канашра, Улатӑрта, Сӗнтӗрвӑрринче тата ытти хуласенче те суйлав участокӗсем тума чи лайӑх çуртсене уйӑрса панӑ. Вырӑнсенче халӗ, — хуласенче кӑна мар, ялсенче те,—участокри суйлав комиссийӗсен çурчӗсене йӗркелеме тытӑннӑ. Вӑрнар районӗнчи Хирпуç ял Советӗнче участокри суйлав комисси çуртне йӗркеленӗ, вулав çуртӗнче агитпункт туса хунӑ. Муркаш районӗнчи Чуманкасси ял Советӗнче сасӑламалли кабинӑсем туса хатӗрлеме тытӑннӑ, хӗрлӗ хӑмач тупса хатӗрленӗ, клуб çуртне илемлетнӗ. Елчӗк районӗнчи райпромкомбинат участокри комиссисем валли сасӑламалли урнӑсем туса хатӗрлеме тытӑннӑ.

Анчах та суйлав участокӗсен пӳлӗмӗсене йӗркелес ӗçре çитменлӗхсем те палӑраççӗ-ха. Хӑшпӗр çӗрте суйлав участокӗсене çутатма лампӑсем тата краççин хатӗрлесе хуман, телефон çыхӑнӑвне организацилес тӗлӗшпе те мӗн кирлине пурне те туса çитермен-ха.

Участоксенчи суйлав комиссийӗсене кулленхи ӗçре округсенчи суйлав комиссийӗсем практикӑллӑ пулӑшу парса тӑмалла, мӗншӗн тесен участоксенчи суйлав комиссийӗсем суйлав кампанийӗн массӑллӑ организацийӗсем пулса тӑраççӗ. Çавӑнпа та участоксенчи суйлав комиссийӗсен ӗçне организацилесси суйлавсене лайӑх ирттерессинче питӗ паллӑ вырӑн йышӑнать. Участокри суйлав комиссин кашни членӗнех уйрӑм ӗç хушмалла, çав ӗçе комисси членӗсем епле туса пынине пӗрмаях сӑнаса пымалла. Участоксенчи комиссисен составӗнче ӗçлекен нумай юлташсемшӗн суйлава хатӗрленсе ирттерес тӗлӗшпе ӗçлени государство ӗçӗн шкулӗ пулса тӑрать. СССР Верховный Совет суйлавне ирттернӗ май совет активисчӗсен чи лайӑх енӗсем—гражданла тивӗçлӗхе ӑнланса тӑрасси, хушнӑ ӗçе тӑвассишӗн çирӗп тӑрӑшни тата вӑл ӗçе лайӑххӑн тӑвас тӗни палӑрмалла.

Суйлав комиссийӗсем тумалли ӗçсем хушшинче суйлавçӑсен списокӗсене епле туса хатӗрленине тӗрӗслесе тӑрасси паллӑ вырӑн йышӑнать. Суйлавçӑсен списокӗсене тӗрӗс те йӗркеллӗ туса хатӗрлесси—пысӑк та паха ӗç пулса тӑрать. Суйлавçӑсем хӑйсене суйлавçӑсен списокне тӗрӗс кӗртнипе кӗртменнине тӗрӗслеме пыриччен списоксене тимлӗн тӗрӗслесе тухас пулать. Суйлавçӑсен списокӗсене епле тунине тӗрӗслеме кирли çакӑнтан та курӑнса тӑрать: хӑшпӗр çӗрте суйлавçӑсен списокӗсене хатӗрленӗ чух пысӑк йӑнӑшсем тӑваççӗ. Вырӑнсенче çак тӗлӗшпе тӑвакан йӑнӑшсене кӑтартса парасси—суйлав комиссийӗсен тивӗçӗ пулса тӑрать.

СССР Верховный Совет суйлавӗсем тӗнчере чи демократиллӗ Сталинла Конституципе чи демократиллӗ Суйлав Законӗн никӗсӗ çинче пулса иртеççӗ. Пирӗн суйлавсем чӑн-чӑнах пурне те тивӗç, пӗтӗм халӑх суйлавӗсем пулаççӗ. Суйлава хатӗрленнӗ май массӑсен политикӑллӑ тата производствӑллӑ активлӑхӗ ӳсет, çакӑ вара совет демократийӗ çӗнӗрен чечекленесси патне илсе пырӗ.

Çӗршыв СССР Верховный Советне суйлама хатӗрленет

СУЙЛАВА ХАТӖРЛЕНСЕ

ШӐХАСАН. Атнашри С. М. Киров ячӗпе тӑракан колхозри комсомолецсем çамрӑк суйлавçӑсем хушшинче агитаципе пропаганда ӗçне лайӑх туса пыраççӗ. СССР Верховный Советне суйламалли Положени пичетленсе тухсанах ӑна кружоксенче вӗренме тытӑнчӗç. Суйлав Положенине союзра тӑман çамрӑксене, ватӑ колхозниксене ӑнлантарса пама 20 комсомолец агитатор пулма вӗрентсе хатӗрлерӗç. Халӗ çак комсомолец-агитоторсем 10 бригадӑра тата фермӑсенче агитаци ӗçне туса пыраççӗ.

Колхозри 4-мӗш бригадӑра агитаторсем пулса Маруся Каховскаяпа Николай Иванов комсомолецсем ӗçлеççӗ. М. Каховская юлташ хӑйӗн участокӗнчи суйлавçӑсене пухса 5 заняти ирттернӗ. Николай Иванов килӗрен çӳресе 34 суйлавçӑна СССР Конституцийӗпе тата суйлав Положенийӗпе тӗплӗн паллаштарнӑ.

СССР Верховный Советне суйлама хатӗрленнӗ май ялти комсомолецсемпе çамрӑксен политикӑллӑ тата ӗçри хастарлӑхӗ чылай ӳсрӗ. Юлашки вӑхӑтра кӑча кунта ӗçре малта пыракан 5 çамрӑка комсомола илнӗ. Халӗ тата 4 çамрӑк комсомол ретне кӗме хатӗрленеççӗ. Вӗсене ВЛКСМ программипе тата уставӗпе тӗплӗн паллаштараççӗ.

Çамрӑк суйлавçӑсен кружокӗнче суйлав Положенине вӗреннисӗр пуçне часчасах докладсем пулаççӗ, вуланӑ кӗнекесене пӗрлешсе сӳтсе яваççӗ. Çавна май библиотекӑран кӗнекесем илсе вулакансен йышӗ те чылай ӳсрӗ. Ялти библиотекӑран 108 çамрӑк яланах кӗнекесем илсе вулаççӗ.

Г. ИСАЕВ.

КИЛӖРЕН ÇӲРЕСЕ ӐНЛАНТАРАÇÇӖ

Советски районри Мӑн Пакӑш ял Советӗнче 30 агитатор ӗçлеççӗ. Вӑл шутра 15 коммунист, 8 комсомолец, ыттисем учительсемпе партире тӑман çамрӑксем. Суйлав участокӗнче мӗнпурӗ 420 суйлавçӑ, пирвайхи хут суйлава хутшӑнакан çамрӑксем 50 çын шутланаççӗ.

Агитколлектив руководителӗ Мокеев юлташ, СССР Верховный Советне суйламалли Положени пичетленсе тухсанах, суйлавçӑсем хушшинче ӗçлеме план тунӑ, ӑна парторганизаци пухӑвӗнче çирӗплетнӗ. Хальхи вӑхӑтчен суйлав Положенине вӗрентес тӗлӗшпе агитаторсен семинарне 8 хут ирттернӗ. Сироткин агитатор ватӑ суйлавçӑсем патне килсене çӳресе суйлав Положенине ӑнлантарса парать. Вулав çуртӗнче справка сӗтелӗ организациленӗ, виçӗ кунта пӗрре боевой листоксем кӑлараççӗ. Вулав çурчӗн заведующийӗ Краснов юлташ суйлава хатӗрленес тӗлӗшпе тӑрӑшса ӗçлет. Лайӑх ӗçлекен агитаторсем суйлавçӑсем панӑ ыйтусене çийӗнчех ӑнлантараймасан, вӗсем патне киле кайса ӑнлантараççӗ.

Ф. СЕМЕНОВ.

Агитколлективсем пур, анчах агитаци ӗçӗ çителӗксӗр

СӖНТӖР. (Хамӑр корр.). СССР Верховный Советне суйлама хатӗрленнӗ май, районра массӑллӑ-ӑнлантарулӑ ӗç анлӑн сарӑлса пырать. ВКП(б) райкомӗ декабрь уйӑхӗн малтанхи кунӗсенчех СССР Верховный Советне суйлама хатӗрленнӗ май парти организацийӗсем умӗнче тӑракан задачӑсем çинчен хӑйӗн черетлӗ пленумӗнче сӳтсе явнӑ. Унсӑр пуçне ВКП(б) райкомӗ Çӳлтикас Урпашра, Шатракассинче, Сӗнтӗрте, Юнкӑра агитаторсен канашлӑвӗсене ирттернӗ. Çак канашлусенче массӑллӑ-ӑнлантарулӑ ӗçе мӗнле туса пымалли çинчен доклад итленӗ тата агитаторсем хӑйсем суйлавçӑсем хушшинче мӗнле ӗçлени çинчен каласа панӑ. Районра 400 яхӑн агитатор ӗçлет, вӗсем 30 агитколлективра пӗрлешсе тӑраççӗ.

Суйлав законне ӑнлантарас тӗлӗшпе нумай парторганизацисем лайӑх ӗçлеççӗ. Шупуç ял Советӗнчи агитколлектив руководителӗ Яшмолкина юлташ агитаторсене канашлура кӑна мар, уйрӑмӑн та вӗрентет. Агитаторсене кунта уйрӑм участоксем сумне çирӗплетнӗ, вӗсем пурӗ 8 заняти ирттернӗ. Ял Советӗнче стена хаçачӗ тухать, унта Суйлав Законне мӗнле ӑнлантарса пани çинчен, суйлава çитӗнӳсемпе кӗтсе илессишӗн колхозниксемпе колхозницӑсем мӗнле кӗрешни çинчен çутатса тӑраççӗ. Вулав çуртӗнче, шкулсенче тата халӑх пуçӑнакан ытти вырӑнсенче СССР Верховный Советне суйламалли Закон çинчен, СССР Конституцийӗ çинчен, Сталин юлташ СССР Конституцийӗн проекчӗ пирки тунӑ доклад çинчен каласусем, докладсем ирттереççӗ. Хаçатсем çинче пичетленсе тухакан тӗрлӗ материалсемпе туллин усӑ кураççӗ.

Массӑллӑ-политикӑллӑ ӗçе Янӑм тата Ильинка ял Советӗсенче те ӑнăçлӑ туса пыраççӗ. Çак ял Советӗсенчи партин пуçламӗш организацийӗсен секретарӗсем Смирновпа Лопманов юлташсем суйлав умӗнхи массӑллӑ-ӑнлантарулӑ ӗçе лайӑх йӗркеленӗ. Шомик ял Советне кӗрекен «Колос» колхозра уйрӑм агитколлектив ӗçлет. Агитколлектива колхоз председателӗн заместителӗ коммунист Костин ертсе пырать. Çак колхозри агитаторсем хӑйсен кулленхи политикӑллӑ-ӑнлантарулӑ ӗçне колхозниксем умӗнче тӑракан кулленхи задачӑсемпе çыхӑнтарса пыма, вӑл задачӑсене пурнӑçлассишӗн кӗрешес ӗçе организацилеме пӗлеççӗ. Çавна пула «Колос» колхоз ялхуçалӑх çулне ӑнăçлӑ вӗçленӗ, государство умӗнчи пур тӗрлӗ парӑмсене те парса татнӑ, обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каçарма пур енчен те тӗплӗн хатӗрленнӗ. Ферма çурчӗсем ӑшӑ, çутӑ, унта йӗркелӗх. Çакӑн пек паха тӗслӗхсене Чкалов ячӗпе тӑракан колхозра та тӗл пулма пулать. Кунта халӗ çитес çуракине хатӗрленес ӗç ӑнăçлӑ пырать. Вӑрлӑхсене тасатаççӗ, ялхуçалӑх машинисене юсаççӗ, вырӑнти удобренисем хатӗрлеççӗ, çавӑнпа пӗрлех вӑрман касса турттармалли тата укçа-тенкӗ пухмалли плана пурнӑçлассишӗн пӗтӗм вӑя хурса ӗçлеççӗ.

Анчах та уйрӑм пуçламӗш парторганизацисем Суйлав Законне ӑнлантарса парас тӗлӗшпе çителӗклӗ ӗçлеççӗ теме çук-ха. Уйрӑмӑнах Ахманейри, Ярославкӑри, Хачӑкри, Хураçкари партин пуçламӗш организацийӗсем массӑллӑ-политикӑллӑ ӗçе çителӗксӗр туса пыраççӗ. Мӑн Сӗнтӗрти территориальнӑй парторганизаци, МТС-ри, райсоюзри, Шашкарти парторганизацисем те Суйлав Законне ӑнлантарас тӗлӗшпе начар ӗçлеççӗ. Сӗнтӗр ял Советӗнче ӗçлекенсем Алешина, Ильгечкина, вӑтам шкулӑн технички Яковлева юлташсем суйлав хӑçан пулассине те пӗлмеççӗ. «Парижская Коммуна» колхоз членӗсем Смыслова, Портнова юлташсем те суйлав хӑçан пуласси çинчен илтмен.

Уйрӑм колхозсенче СССР Верховный Советне суйламалли Положение кӑна вуласа параççӗ. Çавӑнпа та кунта занятисем кирлӗ пек активлӑхпа иртмеççӗ. Жданов, Молотов ячӗсемпе тӑракан колхозсенче çак вӑхӑта çитсе те Суйлав Законӗ çинчен ӑнлантарма тытӑнман.

Шатракасси ял Советӗ сумӗнчи вулав çурчӗ яланах питӗрӗнсе тӑрать. Вулав çурчӗн пуçлӑхӗ Любимова юлташ вулав çуртне пырса та пӑхмасть. Çак йӗркесӗрлӗхе ял Совет председателӗ Кольцов юлташ курать, анчах вулав çурчӗн ӗçне лайӑхлатас тӗлӗшпе нимӗн те тумасть. Çавӑн пекех Ильинкӑри, Юнкӑри вулав çурчӗсем, «Марксист», «Новая жизнь» колхозсен клубӗсем те начар ӗçлеççӗ. Вӗсене юсаман, хутма вутӑ хатӗрлемен, çутмалли япаласем çук тата ытти те.

Шомик ял Совечӗн канцелярийӗнче, колхоз правлени çурчӗсенче, клубра тата халӑх пуçӑнакан ытти вырӑнсенче çитес суйлавсем пирки çырнӑ пӗр лозунг та, пӗр плакат та курма çук. Хаçатсем çакма тунӑ витринӑсем пушах тӑраççӗ. Ял Советне стена çумне çакма СССР Верховный Советне суйламалли Положение 4 экземпляр ярса панӑ. Çак Положенисем декабрӗн 10-мӗшӗччӗнех ял Совет секретарӗн М. Горланова юлташӑн шкапӗнче выртнӑ. Вӗсенчен пӗрне тапак туртакансем çурса пӗтернӗ, теприне вараласа тӑкнӑ. Ял Совет канцелярине кашни кунах суйлавçӑсем йышлӑн пухӑнаççӗ. Анчах вӗсене вулама суйлав литератури, кӗнеке-хаçатсем памаççӗ. Часчасах ял Совет канцелярийӗ тапак турттмалли тата юмах ямалли вырӑн пулса тӑрать. Партин пуçламӗш организаци секретарӗ Олангин юлташ вара çак çитменлӗхсене курмасть, халӑх хушшинче массӑллӑ-политикӑллӑ ӗçе туса пырассишӗн вӑл ответлӑ пулнине туймасть.

СССР Верховный Советне суйламалли кунччен вӑхӑт нумай юлмарӗ. Ялти пӗтӗм культурӑллӑ вӑя политикӑллӑ-массӑллӑ ӗçе тума мобилизацилемелле.

В. ЯСТРЕБОВ.

Килес çулхи тырпулшӑн кӗрешӳ пуçланчӗ

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ. Турханти «Крестьянин» ялхуçалӑх артелӗн членӗсен пухӑвӗнче колхоз председателӗ И. Быков юлташ 1945 çулти ялхуçалӑх ӗçӗсене вӑхӑтра вӗçленӗшӗн колхозниксемпе колхозницӑсене тав турӗ тата умра тӑракан задачӑсем çинчен каларӗ.

— Пирӗн колхоз ялхуçалӑх ӗçӗсене районра пур колхозсенчен те малтан вӗçлерӗ,—терӗ вӑл хӑйӗн сӑмахӗнче, — эпир государство умӗнчи пур обязательствӑсене те вӑхӑтра пурнӑçларӑмӑр. Халӗ пирӗн çитес çулхи вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешӳ пуçласа ямалла, çуракине лайӑхрах хатӗрленмелле.

Колхоз председателӗ хыççӑн пухура бригадирсем, уйрӑм колхозниксем тухса калаçрӗç. Вӗсем çуракине СССР Верховный Советне суйламалли кун тӗлне хатӗрленсе çитме май пуррине палӑртрӗç. Пуçламӗш парторганизаци секретарӗ А. Зайцев юлташ:

— Суйлав умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнса, çуракине хатӗрленсе çитме районри пур колхозсене те чӗнес пулать пирӗн, —терӗ.

Колхозниксемпе колхозницӑсем унпа килӗшрӗç. Çапла вара ӑмӑрту пуçланса кайрӗ.

Ӑмӑртӑва пуçаракансем пуху пулса иртсен тепӗр кунхех хӗрӳллӗ ӗçе тытӑнчӗç. Колхоз правленийӗ ятарласа план тунӑ. Унта мӗнле ӗçе хӑçан вӗçлемеллине, уншӑн кам ответлӑ пулассине, мӗнле ӗç вӑйӗ кирлине кӑтартса панӑ.

Колхоз малтанах ялхуçалӑх машинисемпе ытти ӗç хатӗрӗсене йӗркене кӗртме тӑрӑшрӗ. Колхоз тимӗрçи А. Родионов кӗске вӑхӑтрах колхозӑн 18 плугне, 2 сеялкине, 22 сӳрине юсаса пӗтерчӗ, лаша таврашӗсене тӳрлетрӗ.

Ятарласа уйӑрнӑ бригада вӑрлӑх тасатать. Вӑрлӑх тасатакансем иртен пуçласа тӗттӗмчченех ӗçлеççӗ.

Вырӑнти удобренисем хатӗрлесе хире турттарнӑ çӗрте М. Скворцов, М. Майоров, Н. Гордеев комсомолецсем тӑрӑшса ӗçлеççӗ. М. Майоров юлташ хире тислӗк турттарнӑ çӗрте хӑйӗн килти ӗнипе ӗçлет. Вӑл кунне 20—25 лав тислӗк турттарса 4 ӗçкунӗ таран тӑвать. Хӑйӗн ӗнипе колхозра хастарлӑн ӗçленӗшӗн ӑна ВЛКСМ Центральный Комитечӗн хисеплӗ грамотипе наградӑланӑ.

Колхозниксем хӑйсен обязательствине пурнӑçлас тесе пӗтӗм вӑя хураççӗ. Ӑмӑрту мӗнле пынине палӑртма «Кӑтарту хӑми» тунӑ. Унта малта пыракансене çырса пыраççӗ. Стена хаçачӗсенче, боевой листоксенче лайӑх ӗçлекенсенчен пример илме чӗнсе çырнӑ заметкӑсем тухаççӗ. Партипе комсомолӑн пуçламӗш организацийӗсем уйӑрнӑ агитаторсем суйлав умӗнхи ӑмӑртура тӑрӑшса ӗçлекенсене мухтаççӗ, кахалсене питлеççӗ.

Суйлав умӗнхи ӑмӑрту районри пур колхозсенче те сарӑлса пырать. «Крестьянин» колхоз членӗсен чӗнӗвне колхозсем кӑмӑллӑн йышӑнаççӗ. Вӑл чӗнӗве сӳтсе-явса, колхозниксемпе колхозницӑсем суйлав кунӗ тӗлне çуракине пӗтӗмпех хатӗрленсе çитме обязательствӑсем илеççӗ.

«Правда», «Совет», «Труженик» колхозсем вӑрлӑх фончӗсене хывса çитернӗ. Халӗ вӑрлӑха сортлас ӗçе тытӑннӑ. Вӑрлӑха тӗрӗслекен районри лаборатори колхозсен вӑрлӑхӗсене пӗррӗмӗш хут тӗрӗслесе пӑхма пуçланӑ. «Совет», «Крестьянин» колхозсем вӑрлӑхсен пахалӑхне пӗррӗмӗш хут тӗрӗслеттернӗ.

Ялхуçалӑх машинисемпе инвентарӗсене юсас ӗçе чылай колхозсем хӗрӳллӗн тытӑннӑ. Чапаев ячӗпе тӑракан, «Труловик», «Радио» колхозсем плугсене, сӳресене, сеялкӑсене юсас ӗçе вӗçлесе пыраççӗ.

П. ТИХОНОВ.

ÇУРАКИНЕ ХАТӖРЛЕНЕÇÇӖ

СӖРПУ. Ойкасси ял Советӗнчи «Дружба» колхоз октябрӗн малтанхи кунӗнчех авӑн çапса пӗтерчӗ. Ял Советӗнче чи малтан государство умӗнчи парӑмсене парса татрӗ. Кунсӑр пуçне Хӗрлӗ Çар фондне 2,5 тонна тырӑ пачӗ. Халь колхоз хӗрсех çуракине хатӗрленет. Паянхи куна акма кирлӗ тырӑсене 80 процент сортласа хунӑ. Ялхуçалӑх машинисене 100 процентчӗпех юсанӑ. Колхоз уя 350 лав тислӗк кӑларнӑ. Фермӑри выльӑхсене кирлӗ таран апат хатӗрленӗ, колхозниксене те салатса панӑ. Халӗ колхозниксене ӗçкунӗ тӑрӑх тырӑ валеçсе пама хатӗрленеççӗ.

Колхозӑн 5 ферма, вӗсенче пуринче те выльӑхсем планран ытлашшипех пур.

Н. МИРОНОВ.

ХӐЙӖН ӖНИПЕ ӖÇЛЕСЕ 260 ӖÇКУНӖ ТУНӐ

Калинино районӗнчи «Социализм» колхоз членӗ Михаил Павлов хӑйӗн ӗнипе ялхуçалӑх ӗçӗнче ӗçлет. Тырпул пухса кӗртес ӗç пуçлансан вӑл хӑйӗн ӗнипе ӗçлеме тытӑннӑ та ноябрь уйӑхӗ тӗлне 260 ӗçкунӗ тунӑ. Государство валли тырпул, çӗрулми, пахчаçимӗç Вӑрнара турттарнӑ. уйран итеме кӗлте кӗртнӗ тата ытти те. Павлов юлташ пурӗ 400 ӗçкунӗ ытла тунӑ.

Н. СТЕПАНОВ.

И.В. Сталин Бирнс господина йышӑнни

Декабрӗн 19-мӗшӗнче СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ И. В. Сталин Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Государство секретарьне Д. Бирнс господина йышӑннӑ.

Калаçура СССР Ют çӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Посолӗ В. А. Гарриман господин пулнӑ.

И.В. Сталин Бевин господина йышӑнни

Декабрӗн 19-мӗшӗнче СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ И. В. Сталин Великобританин Ют çӗршыв Ӗçӗсен Министрне Э. Бевин господина йышӑннӑ.

Калаçура СССР Ют çӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов тата Великобритани Посолӗпе А. К. Керр господинпа Ют çӗршыв Ӗçӗсен Министрӗн Яланхи Заместителӗ А. Кадоган господин пулнӑ.

МУСКАВРИ «ДИНАМО» КОМАНДИНЧИ ФУТБОЛИСТСЕМПЕ АНГЛИРИ «КАРДИФ-СИТИ» КЛУБӖН ФУТБОЛИСЧӖСЕМ ХУШШИНЧЕ ПУЛСА ИРТНӖ МАТЧА КИНОТЕАТРСЕНЧЕ КӐТАРТМА ПУÇЛАÇÇӖ

Декабрӗн 17-мӗшӗнче СССР Совнаркомӗ çумӗнчи кинематографи тӗлӗшпе ӗçлекен комитетра Англири «Кардиф-Сити» клубӗн футболисчӗсемпе Мускаври «Динамо» командин футболисчӗсем хушшинче пулса иртнӗ матча экран çинче кӑтартнӑ.

Çак фильма Ешурин, Хавчин тата Зайцев кинооператорсем ӳкерсе илнӗ. Экран çинче çав интереслӗ тӗлпулӑвӑн питӗ çивӗч тапхӑрӗсене ӳкерсе илнӗ. «Динамо» команди Кӑнтӑр Уэльсӑн чемпионне—«Кардиф-Сити» командине çав тери лайӑх çӗнтерни палӑрса тӑрать. Экран çинче чи варринче трибуна курӑнса каять, трибуна çинче Сталин юлташӑн портречӗ уççӑн курӑнса тӑрать, ӑна чӗрӗ чечексемпе илемлетнӗ. Çав портрета Кӑнтӑр Уэльсри шахтер ӳкерсе панӑ.

Трибунӑсенче туп-тулли халӑх. 90 пин çын çав тери интереслӗнсе футбол вӑййи мӗнле пынине пӑхаççӗ. Мускав футболисчӗсем акӑлчансен хапхине пӳске çапса кӗртмессеренех халӑх тӑвӑллӑн алӑ çупать. Паллӑ ӗнтӗ, çав матчра «Динамо» футболисчӗсем акӑлчансен хапхине 10 пӳске çапса кӗртнӗ, акӑлчансем Мускав футболисчӗсен хапхине мӗн пурӗ те пӗр хутчен кӑна çапса кӗртнӗ.

Декабрӗн 17-мӗшӗнчех çак кинокартинӑна Мускаври пур кинотеатрсенче те кӑтартма пуçланӑ. (ТАСС).

Заем вылявӗ

Декабрӗн 20-мӗшӗнче Мускавра Государство университечӗн клубӗнче Виççӗмӗш пятилетка заемӗн (виççӗмӗш çулхи кӑларӑмӗн) вылявӗ пулса иртет. Вылявра 134.748.200 тенкӗлӗх 846.400 выигрыш пулать.

ТЕХНИК-ЗЕМЛЕУСТРОИТЕЛЬСЕН ÇӖНӖ ОТРЯЧӖ

Çак кунсенче Сӗнтӗрвӑрринчи ялхуçалӑх техникумӗ 24 техник-землеустроитель вӗрентсе кӑларнӑ.

Техникумран вӗренсе тухнӑ землеустроительсем Совет Союзӗн тӗрлӗ облаçӗсене ӗçлеме каяççӗ, вӗсенчен пӗр пайӗ Чӑваш республикинче юлать.

Техникумран отлично паллӑсемпе вӗренсе тухнӑ М. Терентьевпа В. Кузнецов юлташсем производствӑллӑ стажсӑрах института вӗренме кӗме право илнӗ.

Техник-землеустроительсем техникумра вӗренсе пӗтернӗ кун савӑнăçлӑ лару пулса иртнӗ. Ялхуçалӑхӗн çӗнӗ специалисчӗсем пирӗн социализмлӑ ялхуçалӑхне малалла аталантарассишӗн пӗтӗм вӑя хурса ӗçлеме сӑмах панӑ.

ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗн XIII-мӗш пленумӗ

Декабрӗн 19-мӗшӗнче ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗн XIII-мӗш пленумӗ пулса иртрӗ. Пленум ВЛКСМ Центральный Комитечӗн XIV-мӗш пленумӗн итогӗсем çинчен комсомол Обкомӗн секретарӗ **Г. И. Петрухин** юлташ докладне итлесе сӳтсе яврӗ.

Петрухин юлташ комсомол организацийӗсем СССР Верховный Совет суйлавне хатӗрленсе тунӑ пысӑк ӗçсене палӑртрӗ. Суйлавçӑсене Суйлав Законне ӑнлантарас тӗлӗшпе республикӑра 5 пин ытла комсомолец агитатор пулса ӗçлеççӗ. Çӗршер комсомолецсемпе çамрӑксене округри тата участоксенчи суйлав комиссисене суйланӑ.

Предприятисемпе учрежденисенчи, колхозсенчи комсомол организацийӗсем суйлавçӑсен списокӗсене тӑвас, агитпунктсене илемлетсе унта агитаципе пропаганда ӗçне туса пырас тӗлӗшпе хастарлӑн ӗçлеççӗ.

Массӑллӑ ӑнлантару ӗçне лайӑх туса пынине пула, ӗççыннисен политикӑллӑ тата ӗçри хастарлӑхӗ нумай ӳсрӗ. Нумай çамрӑксем СССР Верховный Совет суйлавне ӗçре пысӑк çитӗнӳсем тунипе кӗтсе илме хатӗрленеççӗ. Улатӑрти паровозсем юсакан заводри Киреев комсомолец ертсе пыракан бригада ноябрь уйӑхӗнчи ӗç планне 300 процент, Киреев юлташ хӑй 500 процент ытла тултарнӑ. Ӗçлӗх Хӗрлӗ Ялав орденлӗ заводри Полубесова юлташ ертсе пыракан комсомолецсемпе çамрӑксен бригади кулленхи ӗç нормине 250 процент, Рыбаченко юлташ бригади 225 процент ытла тултарса пыраççӗ.

Ишлей тата Вӑрнар МТС-ӗсенчи трактор бригадисем тракторсене срокчен юсаса çитерессишӗн кӗрешеççӗ. Колхозсенчи комсомол организацийӗсем ялхуçалӑх машинисене срокчен юсаса çитерес, вӑрлӑх хывас, уя тислӗк ытларах кӑларас, юр тытас тата вӑрман хатӗрлемелли плана срокчен тултарас тӗлӗшпе ӑмӑртса ӗçлеççӗ. Петрухин юлташ СССР Верховный Совет суйлавне хатӗрленес ӗçре комсомолӑн хӑшпӗр организацийӗсем çителӗксӗр ӗçленине палӑртрӗ. Çамрӑк суйлавçӑсене Суйлав Законне тӗплӗн ӑнлантарса парас тӗлӗшпе комсомолӑн хӑшпӗр организацийӗсем çителӗксӗр ӗçлеççӗ-ха. Чылай агитаторсем массӑллӑ ӑнлантару ӗçне кирлӗ пек туса пымаççӗ.

ВЛКСМ Центральный Комитечӗн XIV-мӗш пленумӗ суйлав кампанийӗ вӑхӑтӗнче комсомол организацийӗсем умӗнче тӑракан пысӑк задачӑсене палӑртса решени йышӑнчӗ. Çав решение комсомолӑн пур организацийӗсенче те тӗплӗн сӳтсе явса, кашни комсомолеца ӑнлантарса памалла, ӑна пурнӑçламалла.

Петрухин юлташ доклачӗ тӑрӑх пренире 15 çын сӑмах тухса каларӗç.

ВЛКСМ Шупашкар хула комитечӗн секретарӗ **Агеева** юлташ комсомол организацийӗсем çамрӑк сулавçӑсем хушшинче ӗçлеме 217 агитатор уйӑрни, вӗсем çамрӑк суйлавçӑсем хушшинче хастарлӑн ӗçлени çинчен каласа пачӗ. Хула Советне суйлавçӑсен списокӗсене тума пулӑшас майпа 53 комсомолец уйӑрнӑ. Комсомолецсен вӑйӗпе суйлав участокӗсем çумӗнче агитпунктсем тӑваççӗ. Халӗ СССР Верховный Совечӗн суйлавӗ ячӗпе йӗлтӗрçӗсен ӑмӑртӑвне ирттерме хатӗрленеççӗ.

ВЛКСМ Хӗрлӗ Чутай райкомӗн секретарӗ **Тихонов** юлташ комсомол организацийӗсем массӑллӑ агитаци ӗçне мӗнле туса пыни çинчен каласа пачӗ. Районра 10 комсомолец агитколлектив руководителӗсем тата 280 комсомолец агитаторсем пулса ӗçлеççӗ. «Крестьянин» колхозри комсомолецсемпе çамрӑксем колхоза çитес çулхи çуракине лайӑх хатӗрленме пулӑшаççӗ, ялхуçалӑх машинисене юсаççӗ, вӑрлӑх сортлаççӗ. Ку колхозри Михайлов, Якунин тата ытти нумай комсомолецсем вӑрман хатӗрлес ӗçре кулленхи нормӑна 120—130 процент таран тултарса пыраççӗ.

Комсомолӑн Улатӑр хула комитечӗн секретарӗ **Салюкова** юлташ СССР Верховный Совет суйлавне хатӗрленнӗ май хулари комсомолецсемпе çамрӑксен ӗçри хастарлӑхӗ ӳсни çинчен калать. Улатӑр деповӗнчи комсомолецсем, суйлав кунне хатӗрленсе, йывӑр турттакан составра яланхинчен 6,5 километр хӑвӑртрах сӳретнӗ. Вӗсен паха примерне ытти паровозниксем те хавасланса йышӑннӑ.

Канашри чугун çул узелӗнчи ВЛКСМ Комитечӗн секретарӗ **Александров** юлташ чугун çул çинче ӗçлекен çамрӑк рабочисен ӗçри хастарлӑхӗ ӳсни çинчен, пур çамрӑк рабочисем те СССР Верховный Совет суйлавӗ ячӗпе пыракан социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнни çинчен каларӗ.

Пленумра Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ **З. А. Андреева** юлташ пысӑк сӑмах тухса каларӗ. Вӑл СССР Верховный Совет суйлавне хатӗрленес май комсомол организацийӗсем умӗнче тӑракан задачӑсене кӑтартса пачӗ.

Юлашкинчен ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн секретарӗ **Я. К. Павлов** юлташ сӑмах тухса каларӗ. Вӑл республикӑри комсомолецсемпе çамрӑксене суйлав кунне тивӗçлипе хатӗрленсе кӗтсе илме, суйлавра хӑйсен сассисене пирӗн Тӑван çӗршывӑн чи лайӑх çыннисемшӗн, коммунистсемпе партире тӑманнисен блокӗ тӑратнӑ кандидатсемшӗн пама чӗнчӗ.

Пленум ВЛКСМ Центральный Комитечӗн XIV-мӗш пленумӗ йышӑннӑ постановление ӑнăçлӑн пурнăçлас майпа тивӗçлӗ решени йышӑнса хӑварчӗ.

Пленум **Г. И. Петрухин** юлташа ВЛКСМ Обкомӗн пӗррӗмӗш секретарӗ пулса ӗçлеме çирӗплетрӗ. Çавӑн пекех **Е. Агеева** юлташа пленум составне кӗртсе бюро членне суйларӗ.

Смоленск хулипе облаçĕнче фашистла нимĕç захватчикĕсем тунă тискер ĕçсемшĕн суд туни

СМОЛЕНСК, декабрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхи ларура свидетельсенчен ыйтнă. Свидетельсем гитлеровецсен тискер ĕçĕсем çинчен кала-кала панă.

Свидетель **Т. И. Чикиркина** çапла калать: 1943 çулхи сентябрьте каялла чакас умĕн нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем Дудино ялĕнчи овощехранилищĕне мирлĕ пурăнакан 170 çынна ытла хăваласа кĕртрĕç те чĕрĕллех çунтарса ячĕç.

Свидетель **С. Г. Антман** çапла калать: нимĕçсен çар çыннисем мирлĕ пурăнакан çынсене, арçынне-хĕрарăмне тата мисе çултине пăхмасăрах, пĕр сăлтавсăрах тытатчĕç те комендатурăна е Германин ытти карательнăй органĕсене илсе каятчĕç, унта ыйтса тĕпченĕ вăхăтра вĕсене питĕ хытă асаплантаратчĕç, вара вĕлеретчĕç. Антмана хăйне те гестапора асаплантарнă, вăл ăнсăртран çеç вилĕмрен çăлăнса юлнă. Каспля ялĕнче нимĕçсем виçĕ арçынна çекĕлпе янаххисенчен çаклатса илсе çакса вĕлернĕ. Çав çынсем калама çук хытă асапланса вилнĕ.

А. П. Гришанова тата **П. Е. Денисова** свидетельсем фашистла вăрă-хурахсем Смоленск облаçĕнче калама çук тискер ĕçсем тунине кăтартакан çĕнĕ фактсем каласа параççĕ. Гитлерла палачсем кашни ялтах асаплантарнă, пере-пере вĕлернĕ, çаратнă, çуртсене çунтара-çунтара янă.

Суда **Е. М. Чернышева** заявлени панă. Ун çинче 551-мĕш номерлĕ лазаретри нимĕç врачĕсем-ирсĕрсем преступникла опыт тунă. Çав опытсем çинчен айăпланакан Модиш каласа панăччĕ. Çар трибуналĕ Чернышевăна суда свидетель шучĕпе чĕнме йышăннă. Е. М. Чернышева çапла каласа панă: фашистсен профессорĕ Мюллер ман çинче опыт турĕ, çавăн пирки эпĕ хăрах куççăр тăрса юлтăм.

Свидетельсенчен ыйтса пĕтерне. Суд председателĕ тата государство айăплаканĕ, гитлеровецсем тыткăна лекнĕ совет çыннисене тата мирлĕ пурăнакан çынсене мĕнле вĕлернине тĕплĕрех пĕлес тесе, медицина экспертизине темиçе ыйту параççĕ.

Ирхи лару çакăнпа хупăнать.

Каçхи ларура государство айăплаканĕ сăмах тухса каланă.

Государство енчен айăплаканĕ юстици старши советникĕ Л. Н. Смирнов каланă сăмах

Государство айăплаканĕ малтан фашистла нимĕç захватчикĕсем авалхи вырăс хулинче Смоленскра тунă тискер ĕçсем çинчен калать.

— Эпир кунта свидетельсем каланине итлерĕмĕр,—тет вăл,—вĕсем нимĕçсем Смоленск хулине малтан шухăшласа хунă тăрăх ишĕлтернине кăтартса пачĕç. Смоленск хулин ишĕлчĕкĕсем те çавăн çинчен каласçĕ. Оккупациллесе тăнă икĕ çул хушшинче фашистсем хулари çуртсен вунă пайĕнчен тăхăр пайне ишĕлтернĕ, электростанцие сирпĕнтерсе янă, Днепр шывĕ урлă хывнă кĕперсене ишĕлтернĕ, культурăпа кану паркне касса тухнă, Германие М. И. Кутузовăн историллĕ памятникне илсе кайнă, Хĕрлĕ Çар çуртне çунтарса янă, обсерваторие сирпĕнтерсе янă. Смоленскри авалхи Кремле мăшкăлласа чыссăрлатнă.

Государство айăплаканĕ суд медицини экспертизин 5.000 совет çыннине пытарнă вырăна чавса пăхнă хыççăн çырнă актне вуласа парать, çав çынсене нимĕçсем радиостанци çурчĕ умĕнче вĕлернĕ. Государство айăплаканĕ экспертизăран ыйтсăн, Прозоровскипе Смольянинов профессорсем тата суд медицинин чи ватă эксперчĕ Семеновский доктор çапла каланă: нимĕçсем вĕлернĕ çынсен хисепĕ 135.000 çынтан нумай иртет, тенĕ.

Пирĕн Тăван çĕршыва тапăнса, — тет малалла государство айăплаканĕ. — гитлерла вăрă-хурахсем Совет Союзĕнчи халăхсене вĕлерсе пĕтерессшĕн пулнă. Çак тĕллев вăл фашистсен пуçлăхĕсен, халь Нюрнбергра айăпланакансен, «раса теорийĕпе» çыхăнса тăнă. Судра çакна лайăх палăртнă: совет çыннисене Смоленск хулипе облаçĕнче тыла сыхлакан армисен «центр» ятлă группировкин командующийĕ фон Шенкендорф генерал хушнипе йышлăн, тăтăшах тата тискеррĕн пĕтерсе пынă. Фон Шенкендорф хăй гитлеровецсен верховнăй командованийĕн пĕтĕмĕшле планĕсемпе кăтартăвĕсем тăрăх ĕçлесе пынă. Халь айăпланакан 10 гитлеровец совет çĕрне хăйсем пек ирсĕр преступниксемпе пĕрле—чĕрсĕр те намăссăр темиçе миллион салтакпа пĕрле, Сталин юлташ калашле, «вылькăхсем пек пулса тăнăскерсемпе» пĕрле килнĕ. вĕсем чи малтан Совет Союзĕнчи халăхсене вĕлерсе пĕтермешкĕн килнĕ.

Нимĕç ирсĕрĕсем совет çыннисене вĕлернĕ чух усă курнă этемле мар тискер майсене экспертсем лайăх кăтартса пачĕç. Çав майсем хушшинче çаксем пур: çынсене чĕрĕллех вĕлерни, медицина опычĕ тунă вăхăтра çынсене чуна çӳçентермелле хăрушăн вĕлерни, вĕсене сарăлакан чирсем юри ертни, юн илсе 5 çулхи ачасене вĕлерни. Çаксемшĕн халĕ пирĕн умра ларакан 10 нимĕç ирсĕрĕ айăплă. Нюрнбергри судра айăпланакан преступниксем те çавăншăнах ответ тытаççĕ; лешсем те, кусем те, —пĕр каварлашăва хутшăннă çынсем; лешсем те, кусем те, пĕртан мар пулсан та, нумай вăхăт хушши пĕр преступникла шайккăрах тăнă. Çак 10 преступник хăйсен начальникĕсем преступникла хушнине пурнăçа кĕртнĕ чухне хăйсем те преступникла пуçарулăх кăтартнă, вĕсем хăйсене хӳтĕлеме пултарайман çынсене мăшкăллас тата тискеррĕн тыткалас тĕлĕшпе пĕр-пĕринчен иртерме тăрăшнă.

Вязьма хулинчен Смоленска хуралласа илсе пынă чухне тыткăнри 30.000 çынна персе вĕлерни çинчен тата çав ĕçе халь айăпланакансем хутшăнни çинчен каласа, государство айăплаканĕ следстви палăртнă материалсем тăрăх çапла калать:

— Вайс, Мюллер, Краузе тата вĕсем пек ытти çынсем, хăйсем мĕн тунине лайăх пĕлсе тăрса, никам хушмасăрах, çынсене вĕлерме тытăннă, вĕсем тыткăна лекнĕ хĕçпăшалсăр совет çыннисене килексе кайса вĕлернĕ. Айăпланакансем хăйсен фашистла пуçлăхĕсем совет çыннисене тискеррĕн тыткалама хушнине мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине эпир кунта лайăх куртăмăр. Профессионалсем, криминалистсем питĕ тĕрлĕ пысăк преступленисем тăваççĕ. Анчах та çав преступленисенчен сахаллăшĕ, вĕсен намăссăрлăхĕпе хăрушлăхĕ енчен пăхсан, Райшманпа ытти айăпланакансем тунă преступленисене çитеççĕ.

Нюрнбергри судра айăпланакансене айăпласа çырнинче нимĕç врачĕсем тыткăна лекнĕ çынсемпе мирлĕ çынсем çинче этемле мар тискер опытсем тунине уйрăмах хытă палăртнă. 551-мĕш номерлĕ хирти лазаретăн преступникла ĕçĕсене çав енчен илсе пăхса, государство айăплаканĕ çав лазаретра лекарь помощникĕ пулса ĕçленĕ Модиш преступникла опытсене хутшăнни çинчен тĕплĕн каласа парать. Уголовнăй ĕçсен историйĕнче çавăн пек преступленисем пулман, тет вăл.

Айăпланакансем—эпир хамăр начальниксем хушнине çеç пурнăçа кĕртсе пурăннă, тесе калама хăтланчĕç. Следстви материалĕсем ак çакна тĕплĕн кăтартса параççĕ: çар трибуналĕ халь хăйсен ĕçне питĕ лайăх пĕлекен сивĕ чĕреллĕ те питĕ хăрушă преступниксене суд тăвать, вĕсенчен кашнийĕ хăй калама çук пысăк преступлени тунине питĕ лайăх пĕлсе тăнă.

Айăпланакансем пурте уголовнăй закон умĕнче ответлă пулнине лайăх палăртнă тесе шутласа, государство айăплаканĕ малалла кашни айăпланаканăн преступленийĕсене тĕплĕн кăтартса панă. Модиша юнлă та ирсĕр преступленисем тунă çĕрте хытă тăрăшнăшăн иккĕмĕш степень тимĕр хĕреспе наградăланă пулнă; вăл совет çыннисене вĕлернĕ çеç мар, вăл калама çук хытă асапланнă совет çыннисене тата хытăрах асаплантарма тăрăшнă. Тыткăнри совет çыннисене сыватма илсе пырсан вĕлерни тата çамрăк ачасенчен юн илсе вĕсене вĕлерни—пĕлетăркаçах тата малтан шухăшласа хунă тăрăх тунă ĕç пулнă. Модиш хăй 24 совет гражданĕнчен кая мар вĕлернĕ, çакна вăл хăй те тунмарĕ.

Айăпланакансенчен кашнийĕ экспедицисене хутшăннă. Çак экспедицисем тыткăна лекнĕ совет çыннисене тата мирлĕ пурăнакан халăха тискеррĕн тыткаланă, пере-пере вĕлернĕ, чĕрĕллех çĕре чавса пытарнă, çаратнă.

Смоленск хулине ытти хуласенчи мирлĕ пурăнакан халăха тата «газевагенсемпе» «душегубкăсенче» вĕлернĕ.

Государство айăплаканĕ çав преступниксене СССР Верховнăй Совет Президиумĕн 1943 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх айăплать. Судра кашни айăпланаканăн айăпне питĕ лайăх палăртнă, айăпланакансене пурне те пысăк наказани памалла. Вĕсен 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче пуçланă çулĕ виселипа патĕнче çеç пĕтме пултарать.

— Нумай асап курнă Смоленскăн халĕ кунта ларакан çыннисем айăпланакансем çине çиленсе тата йĕрĕнсе пăхаççĕ.—тет прокурор Смирнов юлташ,—наркăмăшлă ирсĕрсем çине çавăн пек пăхмалла та.

Гражданесем-судьясем, пĕтĕм совет халăхĕ эсир приговор йышăнассине кĕтет. Çак усалсем вилме тивĕçлĕ, фашистла нимĕç преступникĕсем тискеррĕн вĕлернĕ совет çыннисен ятне тасан асăнмалла пултăр тесе, правăпа тĕрĕслĕх çиеле тухчăр тесе вĕлерес пулать!

Прокурор каласа пĕтерне хыççăн суд тепĕр кунччен перерыв тăвать.

Индонезири сапăçусем çинчен

ЛОНДОН, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Санди экспресс хаçат Ява утравĕ çинчи çапăçусем пирки çапла çырать: «Тем каласан та, Ява утравĕсем çинчи çапăçусем пирки Англи халăхĕ питĕ тарăхать. Англи халăхĕ пирĕн салтаксем японецсене хирĕç çапăçнине ырлать, анчах та пирĕн салтаксем индонезецсене хирĕç çапăçнă пирки Англи халăхĕ тарăхать. Англи салтакĕсене вĕлернĕшĕн индонезецсен ялĕсене çунтарса яни çинчен Англи халăхĕ çав тери çилленсе вулать мĕншĕн тесен вăл çакна лайăх сиссе тăрать: пирĕн çарсем Индонезире пулмасан, нумай лайăхрах пулнă пулĕччĕ, кара пирĕн салтаксем те пĕтмен пулĕччĕç. Англи халăхĕ çакăнтан хăраса тăрать: Индонези халăхĕ хушшинче Англие курайман шухăш-кăмăлсем нумай çулсем хушши пĕтмесĕр тăма пултараççĕ».

Нимĕçсен вăрçă пуçланăшăн айăплă тĕп преступникĕсене Нюрнберг хулинче суд туни

ДЕКАБРĔН 17-МĔШĔНЧИ ИРХИ ЛАРУ ВĔÇĔ*)

Перерыв хыççăн трибунал председателĕ Лоуренс Америка енчен айăплакана Сторн полковнике сăмах парать. Хăйĕн сăмахĕнче вăл гитлерла партин ертсе пыракан составĕ тунă преступленисене кăтартса парать. Гитлерла парти, тет вăл, каварлашăвăн тĕп вăйĕ пулнă. Вăл партин ертсе пыракан составĕ пĕтĕм тĕнчене тата этемлĕхе хирĕç тунă преступленисемшĕн ответлă пулса тăрать. Фашистла партин ертсе пыракан составĕн членĕсен ответлăхĕ вĕсем ертсе пынă çарăн айăпĕнчен темиçе хут пысăкрах. Айăплакан гитлерла парти епле тытăнса тăни çинче тĕплĕн чарăнса тăрать. Вăл парти пирамида евĕрлĕ йĕркеленсе тăнă. Гитлерла партин пуçĕнче «фюрер» тăнă, ăна рейхслейтерсем пăхăнса тăнă. Айăпланакансем хушшинче Розенберг, Ширах, Фрик, Борман, Франк тата хăйне хăй вилнĕ Лей рейхслейтерсем шутланнă. Кунсăр пуçне 40 гаулейтер пулнă. Гитлеровецсен ют патшалăхсенчи организацине «Гау» тесе шутланă. Çапла вара 41 «Гау», 808 крейслейтер, 28.386 ортсгруппенлейтерсем, 89.378 целленлейтерсем тата 463.048 блоклейтерсем шутланнă. Çапла ĕнтĕ пĕтĕм Германийĕпех фашистла лидерсем пулнă, вĕсем халăхăн кашни утăмне сăнаса тăнă.

Айăплакан гитлеровецсем официальнăй йĕркепе кăларнă изданисене вуласа парать, вĕсенче гитлеровецсен тĕрлĕ рангри чиновникĕсен задачисене палăртса панă. Çавăн пекех вăл гитлерла партин уставне тата гитлерла партин задачисем çинчен гитлеровецсем хăйсем каланине вуласа парать. Çав цитатăсем гитлерла организаци преступникле организаци пулни çинчен каласа параççĕ.

Çакăнпа трибуналăн декабрĕн 17-мĕшĕнчи ирхи ларăвĕ хупăннă.

ДЕКАБРĔН 17-МĔШĔНЧИ КАÇХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Трибуналăн каçхи ларăвĕнче Америка айăплаканĕсен представителĕ Сторн полковник трибунала гитлеровецсен пуçлăхĕсем çинчен калакан документсене панă.

Гитлер партийĕн организациллĕ никĕсĕ, тет вăл, «фюрерство» принципĕ пулнă. Германи государствинĕ çӳлтен пуçласа аяла çитиччченех çав принципа туса хунă. Çапла каланă: халăх хăйне хăй тытса тăма пултараймасть, ăна ертсе пырас ĕçе Гитлер партийĕнче вĕреннĕ çынсем ертсе пымалла. Çавăн пек çынсем анчах ертсе пыракан вырăнта ĕçлеме пултарнă. Гитлеровецсен пуçлăхĕсем влаçа хăйсен аллинче тытса тăракан çынсен (хохайтстрегерсен) ушкăнне туса хунă, вĕсем хăйсем пуç пулса тăнă облаçра Гитлер партийĕ ячĕпе ĕçленĕ. Влаçа хăйĕн аллинче тытса тăракан çыннăн хăй ĕçлекен облаçра мĕн пулнине пурне те сăнаса тăмалла пулнă. Вăл пĕр-пĕр ĕç тунă чухне Гитлер партийĕн организацийĕсемпе, çавăн пекех тата штурмовой отрядсемпе, гитлерла çамрăксемпе, эсэсовецсен организацийĕсемпе тата ыттисемпе те усă курма пултарнă.

Гитлер партине ертсе пынă çынсем çинчен калакан цифрăсене илсе, Сторн полковник çапла калать: Германире ертсе пырас ĕçре ĕçленĕ гитлеровецсен хисепĕ 700.000 çынна яхăн пулнă; çак хисепе партин мĕнпур функционерĕсене кĕртсен, çав ушкăнăн хисепĕ 2 миллион çынна çитнĕ пулĕччĕ.

Гитлер партийĕн ертсе пыракан пайĕ мĕнле йĕркеленсе тăнине тата унăн ĕçĕсене пăхса тухса, айăплакан çапла калать: гитлеровецсен ертсе пыракан çыннисем пурте каварлашăва хутшăннă çынсем пулса тăраççĕ, тет.

Çав партин руководстви Германи государствине пĕтĕмпех хăйне пăхăнтарнă, унтан вăл хăйĕн преступленийĕсене тумалли хатĕр туса хунă. Гитлер партийĕн ертсе пыракан çыннисем мире хирĕç каварлашнăшăн, агрессиллĕ вăрçа хатĕрлесе ăна пуçласа янăшăн, вăрçăри мĕнпур преступленисемшĕн тата этемлĕхе хирĕç тунă преступленисемшĕн айăплă.

Гитлер партийĕн ертсе пынă çыннисем тунă преступленисене тĕплĕн кăтартса парса, Сторн полковник çапла калать: гитлеровецсен пуçлăхĕсем Германире еврейсене хĕсĕрлессине сарса янăшăн, вĕсене аркатнăшăн, пĕр айăпсăр темиçе пин еврее тытса хупнăшăн тата вĕлернĕшĕн айăплă, тет.

Малалла прокурор çапла калать: гитлеровецсен ертсе пынă çыннисем союзлă çĕршывсен летчикĕсене (вĕсен самолечĕсене Германи çинче персе ӳкернĕ хыççăн) вĕлернĕшĕн ответ тытмалла, тет. Вăл Гитлерăн 1943 çулхи августăн 10-мĕшĕнче полицие панă приказĕнчен хăш-пĕр вырăнсене вуласа парать. Унта çапла каланă: парашютпа аннă летчиксене «халăх хаярран тыткаласан», полици унта хутшăнмалла мар, тенĕ.

Хăйĕн айăпласа каланă сăмахĕн çак пайне пĕтĕçтерсе парса, Сторн полковник çапла калать: гитлеровецсен ертсе пынă çыннисем тыткăна лекнĕ çынсене мĕнле тыткаламалли çинчен Женевăра тунă договора пăснă, тет.

Фашистсен пуçлăхĕсем нумай тĕрлĕ преступленисем тунă. Гитлеровецсем профсоюзсене аркатса тăкнă çеç мар, вĕсен пурлăхне те тытса илнĕ. Айăплакан малалла Розенбергăн Борман патне янă çырăвне вуласа парать. Вăл çырура гаулейтерсен профсоюзсен пурлăхне тытса илме кансĕрлемелле марри çинчен, вĕсен çав ĕçе хăйсен ертсе пымалли çинчен каланă.

Айăплакан малалла гитлеровецсен пуçлăхĕсем—рейхслейтерĕсемпе гаулейтерĕсем—уйрăмах пысăк ответ тытмаллине кăтартса парать.

Законлăха пăсасси гитлеровецсен йăли пулнă. Айăплакан пĕр документ вуласа парать. Вăл документран çакă курăнать: юстици министерстви полиципе хăйне уйрăм килĕшӳ тунă, çав килĕшӳ полицие законсене тытса пымасăр ĕçлеме ирĕк панă. 1943 çулхи ноябрĕн 5-мĕшĕнче çакăн пек распоряжени панă: поляксен, вырăссен, украинецсен тата хĕвелтухăçĕнчи çĕрсенче пурăнакан ытти çынсен ĕçĕсене пăхнă чух пирĕн законсемпе усă курмалла мар, тенĕ.

Айăплакан малалла гитлеровецсен пуçлăхĕсем чиркӳпе чиркӳре ĕçлекен çынсене хирĕç кĕрешни çинчен калать.

Йышлă документсем вуласа парса, айăплакан çакна кăтартса парать: гитлеровецсем чиркӳсене тапăннă, оккупациленĕ çĕршывсенче чиркӳре ĕçленĕ çынсене аркатнă тата çаратнă, вĕсене концентрациллĕ лагерьсене хупнă, выçăпа асаплантарнă тата хĕненĕ.

Çакăнпа каçхи лару хупăннă.

ДЕКАБРĔН 17-МĔШĔНЧИ ИРХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Трибуналăн декабрĕн 18-мĕшĕнчи ирхи ларăвĕнче Америка айăплаканĕсен представителĕ Сторн полковник сăмах каланă. Вăл Гитлер партийĕн ертсе пынă çыннисен преступленийĕсене кăтартакан документсене вуласа парать. Гитлер партийĕн ертсе пынă çыннисем чиркӳ харпăрлăхне тытса илес ĕçе тӳрремĕнех хутшăннă.

Гитлеровецсем влаçа хăйсен аллине тытса илнĕ хыççăнах профсоюзсене хĕсĕрлеме тата аркатма пуçланă. Роберт Лей, «ĕçлĕх фрончĕн» рейхслейтерĕ тата руководителĕ пулса ĕçлесе, Гитлер хушнă тăрăх профсоюзсене аркатса тата вĕсен пурлăхне туртса илме пуçланă. Германири профсоюзсен çурчĕсене штурмовиксемпе эсэсовецсем тытса илнĕ, профсоюзсене хăйсене салатса янă. Заводсенче гитлеровецсен ячейкисем профсоюзсен мĕнпур харпăрлăхĕпе фончĕсене хăйсен аллине ярса илнĕ. 1933 çулхи майăн 19-мĕшĕнче рабочисене предпринимательсемпе калаçу иртерме чаракан декрет кăларнă. Гитлеровецсем заводсене хăйсен уполномоченнăйĕсене лартнă, çав уполномоченнăйсем рабочисен прависене тытса илнĕ. вĕсем Германири рабочи класа вăйлăрах эксплоатацилемелли тĕп хатĕрсенчен пĕри пулса тăнă. Гитлеровецсем промышленность предприятийĕсенче «фюрерство» принципĕ туса хунă. Çав принцип тăрăх, предпринимателĕн предприятире «çулпуç» пулмалла пулнă. рабочисен вăл каланă тăрăх ĕçлесе тăмалла пулнă. 1933 çулхи майăн 2-мĕшĕнче гитлеровецсем «ĕçлĕх фрончĕ» тенĕскерне туса хунă. çав фронт пуçĕнче хисеплĕ шеф вырăнĕнче Гитлер тăнă, Роберт Лей вăл организацин чăн пуçлăхĕ пулнă. «Ĕçлĕх фрончĕпе» ĕçлеме активлă гитлеровецсене янă. Çав гитлеровецсен рабочисене хăйсене кирлĕ пек пурăнма ĕçлеттермелле пулнă.

Гитлер партийĕн ертсе пынă çыннисем Европăри çĕршывсенче искусство пуянлăхĕсене çаратнăшăн та ответ тытмалла, тет айăплакан. Европăри халăхсен искусство япалисене тата ытти хаклă япалисене çаратмашкăн гитлеровецсем хăйне уйрăм штаб туса хунă. Çав штаба Розенберг ертсе пынă. Вăл штаба тăвас ĕçе, çавăн пекех тата хаклă япаласемпе искусство произведенийĕсене çаратас ĕçе халь айăпланакан Кейтель, Геринг, Франк, Германи çарĕн генеральнăй штабĕ, хĕçпăшаллă вăйсен верховнăй командованийĕн штабĕ, гестапо тата «СС» активлăн хутшăннă.

Айăплакан трибунала Польшăра Франк çаратнă искусство произведенийĕсен каталогне парать. Çав каталога Мюнхен çывăхĕнче Франк çуртĕнче тупнă. Вăл каталогра голландецсен, французсен тата испанецсен чаплă художникĕсем ӳкернĕ картинăсен ячĕсем, питĕ сайра тĕл пулакан кĕнекесен списокĕ тата ыттисем те пур.

Гитлеровецсем Польшăра вăрланă искусство произведенийĕсене нумайĕшне Гитлера, Геринга тата фашистсен ытти пуçлăхĕсене салатса панă. Европа литературăпа искусствăн хаклăран та хаклă произведенийĕсене сыхласа усранă, тет айăплакан,—çав произведенисене цивилизаци пуçлансан икĕ пин çул хушшинче çырса хатĕрленĕ. Гитлерла ирсĕрсем пынă та çав пуянлăха йĕркипе çаратма пуçланă. Айăплакан малалла Гитлер хăй алă пуснă темиçе приказа вуласа парать. Çав приказсенче Европăра искусство произведенийĕсене çаратмалли çинчен каланă.

1940 çулхи июнĕн 5-мĕшĕнче Кейтель алă пуснă приказ тăрăх, арми чаçĕсен «хăрушсăрлăх полицийĕпе» тата гестапопа пĕрле Голландири, Бельгири, Люксембургри тата Францири мĕнпур музейсене архивсене тата государство библиотекисене, искусство произведенийĕсемпе питĕ сайра тĕл пулакан кĕнекесене тытса илмешкĕн ухтарса тухмалла пулнă. Каярахпа Розенберг штабĕ Украинăра тата ытти совет территорийĕсенче, çавăн пекех тата Грецире Югославире те ĕçлеме пуçланă. Совет Союзĕнче искусство произведенийĕсене çаратас ĕçре верховнăй командованийĕн штабĕ Розенберг штабĕпе таччăн çыхăнса ĕçленĕ. 1942 çулхи майăн 30-мĕшĕнче Геринг хăйĕн Розенберг патне янă çырăвĕнче çапла каланă: Розенберг штабне ĕçлеме эпĕ хам пулăшатăп, тенĕ. Геринг çавăн пек тăрăшнине ăнланма çăмăл, тет айăплакан, мĕншĕн тесессĕн вăл искусство произведенийĕсене нумайĕшне хăй çаратнă. Розенберг штабĕ искусствăпа литература произведенийĕсене çеç мар, ытти хаклă япаласене те вăрланă, уйрăм илсе кăтартсан—сĕтел-пукана, савăт-сапана тата ыттине те вăрланă. Вĕсене вăрламашкăн час-часах ухтарса çӳренĕ. Пĕр Парижра кăна 20.000 ытла хваттерти пурлăха туртса илнĕ.

Айăплакан малалла трибунала, документ вырăнне хурса, Розенберг штабĕ тытса илнĕ искусство произведенийĕсен ӳкерчĕкĕсене пичетленĕ 39 том кĕнеке парать. Искусство произведенийĕсенчен нумайĕшне каярахпа Америка çарĕсем Бăнтăр Баварире çĕр айĕнчи шăтăкра тупнă. 1944 çулхи июлĕн 15-мĕшĕ тĕлне гитлеровецсем хăйсем çаратса пухнă искусство произведенийĕсене классификациленĕ. Вăл спосокра 21.903 япала пулнă. вĕсем хушшинче 5.281 картина, 684 миниатюра, 2.477 сĕтел-пукан, искусствăн алăпа тунă 5.825 япали пулнă. Çав 39 том—çаратнă япаласене пурне те кăтартса паракан каталог пулмасть-ха. Айăплакан çапла шутлать: гитлеровецсем тытса илнĕ мĕнпур искусство япалисен ячĕсене пичетлес тесен, çавăн пек томсем 350-ран пуçласа 400-е çитиччен кирлĕ пулнă пулĕччĕç. Çакă пире лăплантарать, тет айăплакан: çав произведенисене пурне те халь союзниксен çарĕсем каялла тытса илнĕ, тивĕçлĕ çынсемпе организацисем вăл произведенисене хăйсен хуçисене тавăрса параççĕ.

Европăра искусство произведенийĕсене çаратнăшăн Гитлер партийĕн ертсе пынă çыннисем айăплине тата халь айăпланакансенчен кашнийĕ айăплине кăтартса панă хыççăн, айăплакан пĕр диаграмма кăтартать. Ăна гитлеровецсем «партин сăн-пичĕ» ят парса пичетлесе кăларнă кĕнекерен илнĕ. Çав диаграмма çакна кăтартса парать: Гитлер партийĕ вунă çултан иртнĕ кашни нимĕçĕн пурнăçне пĕтĕмпех контроллесе тăнă.

Кун хыççăн айăплакан Германин импери правительствин преступленийĕсем çинчен калама пуçлать. Гитлерла йĕркере импери правительстви Гитлер партийĕн тĕп орудийĕ пулса тăнă, вăл çав партин политикине пурнăçа кĕртме пуçланă. Импери правительствине гитлерла каварлашуçăсене кĕртнĕ. Мĕнпурĕ 48 министр пулнă. Вĕсенчен 17-шĕ, халь кунта çук Бормана та шутласан, халь кунта айăпланаççĕ. 8-шĕ вилнĕ тесе шутлаççĕ.

Ирхи лару çакăнпа пĕтет.

ДЕКАБРĔН 18-МĔШĔНЧИ КАÇХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Трибуналăн декабрĕн 18-мĕшĕнчи каçхи ларăвĕнче Сторн полковник Германин импери правительстви преступникла правительство пулнине кăтартакан документсене вула-вула панă.

Импери кабинечĕсĕр пуçне, Гитлер 1938 çулта тата вăрттăн кабинет туса хунă. Çав учреждение тума хушса çырнă декретра Гитлер çапла каланă: çак учреждение эпĕ ют çĕршывсем тĕлĕшпе тытса пымалли политикăра хама пулăшма тăватăп, тенĕ. Кабинет председателĕ пулма импери министрне фон Нейрат барона лартнă, членсем пулма—имперни ют çĕршыв ĕçĕсен министрне Риббентропа, Пруссин премьер-министрне, имперни авиаци министрне, сывлăш-çар вăйĕсен главнокомандующине—генерал-фельдмаршала Геринга, «фюрер заместительне» импери министрне Рудольф Гесса, имперни пропаганда министрне Геббельса, импери министрне тата канцелярии начальникне Ламмерса, главнокомандующипе фон Браухич генерала, тинĕс-çар флочĕн главнокомандующине Редер адмирала, хĕçпăшаллă вăйсен верховнăй командованийĕн штабĕн начальникне Кейтеле лартнă.

Айăплакан çапла калать: вăрттăн кабинетăн кашни членĕ е импери министрĕ пулнă пулĕччĕ, е, хĕçпăшаллă вăйсемпе флот командующийĕсем пек, тинĕс министрĕн заместителĕсем пулнă пулĕччĕç.

1939 çулта Гитлер правительствăн тата тепĕр организацине — государство оборонин советне туса хунă. Вăл кабинета çав çынсемех кĕнĕ: Геринг (председатель), Гесс, Фрик, Функ, Ламмерс, Кейтель кĕнĕ.

Айăплакан тепĕр хут çакна палăртса парать: çав çынсем ахаль кабинетăн членĕсемех пулнă. Ахаль кабинетпа министрсен совечĕ хушшинчи уйрăмлăх кирлĕ мар çĕртен туртса кăларнăскер çеç пулнă. Гитлер вĕсене шанчăклă çынсене лартнă. Çапла ĕнтĕ, имперни мĕнпур учрежденийĕсем халь айăпланакансен аллинче тăнă, е айăпланакансем вĕсене хăйсене пăхăнса тăнă çынсем урлă тĕрĕслесе тăнă.

Сторн трибунала оборона совечĕн пĕр вăхăтрах министерствăсен членĕсем те пулса ĕçленĕ икĕ членĕ çине çаврăнса пăхма ыйтать: импери администрацийĕ тĕлĕшпе ĕçленĕ главнăй уполномоченнăй çине тата экономика тĕлĕшпе ĕçленĕ главнăй уполномоченнăй çине. Малтанхи вырăнта айăпланакан Фрик, иккĕмĕш вырăнта—айăпланакан Шахт ĕçленĕ. Шахт вырăнне каярахпа Функ ĕçлеме пуçланă. Çав çынсене ытти нумай министерствăсем пăхăнса тăнă. Верховнăй командованийĕн штабĕн начальникĕпе пĕрле çав çынсем хăватлă триумвират пулнă, вăл триумвирата виçĕ çыннăн коллегийĕ тесе ят панă. Çав коллеги законсем кăларма пултарнă. Вăл вăрçа хатĕрленес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăнă.

Айăплакан малалла çапла пĕлтерет: Гитлер партийĕн правительствине туса хурсанах çав правительствăра виçĕ фашист пулнă: Гитлер, Геринг тата Фрик. 1937 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче Гитлер импери кабинечĕн фашистла партире тăман мĕнпур членĕсене хăйĕн партине илнĕ. Çапла вара партие Фрич генерал-полковника, Редер адмирала, Мейсснера, Ламмерса, Функа, Мильха тата ыттисене те илнĕ. Çав кунах «фюрер» вĕсене Гитлер партийĕн чи аслă палли пулса тăракан ылттăн паллă панă. Сторн полковник çапла калать: çав çынсем Гитлер партине кĕмесĕр тăма пултарнă. Анчах та çавăн чухнехи министрсенчен пĕри кăна—почта министрĕ Эльц-Рубенах барон çеç партие кĕмен. Çав министрăн вара вырăнтан тухмалла пулнă.

Сторн полковник, импери правительствине малалла айăпласа, трибунала Гитлер программин 25 параграфне аса илтерет. Çав программа политикăллă каварлашăвăн политикăллă никĕсĕ пулнине палăртса, айăплакан малалла çапла калать: импери правительстви, власть пуçне Гитлер тăнăранпа Германи пĕтсе ларичченех, çав 25 параграфра кăтартнă преступникла шухăшсене законлă туса хума питĕ хытă тăрăшнă.

Импери правительстви Гитлер партийĕн аркатмалли тата этеме этем курайми тумалли ĕçĕсене пурне те «законлă туса хунă». Çакăнпа пĕрлех импери правительстви политикăллă террора та, гитлерла бандăсен вăрă-хурахла ĕçĕсене те «законлă» туса хунă. Çав законсем Гитлер партийĕн политикăллă противникĕсене государство хӳтĕлĕхĕсĕр тăратса хăварнă çеç мар. Вĕсем Германи государствипе унăн пĕтĕм аппарачĕн мĕнпур вăйĕсене Гитлер гангстерĕсем майлă ĕçлесе тăмалла туса хунă.

Импери правительстви хăйĕн пулăшуллă кабинечĕсемпе тата коллегийĕсемпе пĕрле каварлашуçăсен чăн-чăн йăви пулнă, тет айăплакан. Импери правительстви мире хирĕç каварлашнă, вăл вăрçă пуçлама хушнă, вăл хăйне пăхăнса тăракан çынсене вăрçăра йышлă преступленисем тума тата этемлĕхе хирĕç пыракан преступленисем тума хĕтĕртсе тăнă. Сторн çапла калать: айăпланакан 22 çынтан 17-шĕ импери правительствин членĕсем пулнă. Вĕсем пурте импери правительствин преступникла ĕçĕсемшĕн, гитлерла каварлашуçăсен йышлă та хăрушă преступленийĕсене законлă туса хунăшăн ответ тытмалла.

Пилĕк минутлăх перерыв хыççăн Сторн полковник штурмовой отрядсем тунăшăн айăплама пуçлать. Çав отрядсене вăл «нацистла юхăмăн пуçламĕш тапхăрĕнче организациленнĕ бандăсем» тесе ят парать. Штурмовой отрядсем Германире влаçа тытса илес ĕçре гитлерла каварлашуçăсен аллинче ирсĕр инструмент вырăнĕнче пулнă. Штурмовой отрядсен задачисем условисене кура улшăнса пынă. Каварлашăвăн малтанхи тапхăрĕнче штурмовой отрядсем нимĕç халăхне ухмахлантармалли хатĕр пулнă. Вĕсем Гитлер пропагандине сарнă, час-часах вĕсем сăмахпа калас вырăнне чукмарпа усă курнă.

Влаçа тытса илессишĕн кĕрешнĕ вăхăтра штурмовой отрядсем гитлеровецсен пуçлăхĕсем çумĕнче ĕçлесе тăнă гангстерсем пулнă. Вĕсем оппозицире тăнă политикăллă партисене аркатнă, хăйсен политикăллă противникĕсене вĕлернĕ. Гитлеровецсем влаçа хăйсен аллине илнĕ хыççăн штурмовой отрядсем еврейсене аркатса çӳренĕ, профсоюзсене çаратнă, гитлеровецсем пуç пулса тăнине хирĕç мĕн те пулсан калама хăйнă çынсене тыта-тыта хупнă тата хĕненĕ. Штурмовой отрядсем фашистла режима хирĕç пынă çынсене вĕлернĕ. Штурмовой отрядсен историйĕн юлашки тапхăрĕнче вĕсем Германин хĕçпăшаллă вăйĕсене туса хурас ĕçе активлăн хутшăннă.

Айăплакан малалла гитлерла каварлашуçăсем тата штурмовиксен преступникла организацийĕ пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса тăнине кăтартса парать. Гитлер штурмовой отрядсен чи аслă «фюрерĕ» пулнă. Унăн заместителĕ Гесс штурмовой отрядсене ертсе пырас ĕçре питĕ пысăк вырăн йышăнса тăнă. Айăпланакан Ширах, Штрейхер, Розенберг тата хăшпĕр ытти çынсем штурмовой отрядсен обергруппенфюрерĕсем пулнă, урăхла каласан, вĕсен генерал-лейтенантпа тан чин пулнă. Айăплакан малалла штурмовой отрядсем чи малтанхи тапхăрта мĕн туса пурăннине тĕплĕн кăтартса пама пуçлать.

Каçхи лару çакăнпа хупăнать.

*)Лару пуçланăшĕ «Чăваш Коммунин» 246-мĕш номерĕнче.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-93, ял хуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00612. Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Тираж 16.000 экз.